27-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1944
ОКТЯБРЬ
13
ЭРНЕКУН
202(6697) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗӖ

Совет Союзӗн Маршалне МАЛИНОВСКИЕ

УКРАИНӐРИ 2-мӗш фронт ҫарӗсем, ӑнӑҫлӑ наступление вӑйлатса пырса, паян, октябрӗн 11-мӗшӗнче, Трансильвани столицине КЛУЖ хулине штурмласа тытса илнӗ.

Ҫавӑнпа пӗр вӑхӑтрах фронт ҫарӗсем, ТИССА шывӗ урлӑ каҫса кайса, Венгрин хуҫалӑхпа политика тата администраци тӗлӗшӗнчен пысӑк центр пулса тӑракан СЕГЕД хулине тытса илнӗ.

КЛУЖ тата СЕГЕД хулисене тытса илессишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче ТРОФИМЕНКО генерал-полковникӑн, МАНАГАРОВ генерал-лейтенантӑн, ШЛЕМИН генерал-лейтенантӑн, ГОРЯЧЕВ генерал-лейтенантӑн, ПЕТРУШЕВСКИЙ генерал-лейтенантӑн, КОЛЧУН генерал-майорӑн, ОСТАШЕНКО генерал-майорӑн, КАРЛОВ генерал-майорӑн, КОНЕВ генерал-майорӑн, ХОХЛОВ полковникӑн, ГУЩИН полковникӑн, КОСТРЫКИН полковникӑн, КАРАМЫШЕВ генерал-майорӑн, ЗДАНОВИЧ генерал-майорӑн, БУРИН полковникӑн, ДУНАЕВ полковникӑн, ЕСИН полковникӑн, ПАРФЕНОВ полковникӑн, КОВТУН-СТАНКЕВИЧ полковникӑн ҫарӗсем; артиллери генерал-полковникӗн ФОМИНӐН, артиллери генерал-майорӗн ЛЕБЕДЕВӐН, артиллери генерал-майорӗн АЛЕКСЕЕНКӐН, артиллери генерал-майорӗн БОБРОВНИКОВӐН, артиллери генерал-майорӗн ПОПОВИЧӐН, ЗЫКОВ полковникӑн, ИВАНОВ полковникӑн артиллерисчӗсем; танковӑй ҫарсен генерал-полковникӗн КУРКИНӐН, РУМЯНЦЕВ полковникӑн, СТЫЗИК полковникӑн, БРИЖЕНЕВ полковникӑн танкисчӗсем; авиаци генерал-полковникӗн ГОРЮНОВӐН, авиаци генерал-лейтенанчӗн СТЕПИЧЕВӐН, авиаци генерал-лейтенанчӗн ПОДГОРНЫЙӐН, авиаци генерал-майорӗн КАМАНИНӐН, ГЕЙБО полковникӑн, БЛАГОВЕЩЕНСКИЙ полковникӑн летчикӗсем; инженери ҫарӗсен генерал-лейтенанчӗн ЦИРЛИНӐН, инженери ҫарӗсен генерал-майорӗн ИГНАТОВӐН, инженери ҫарӗсен генерал-майорӗн ТЮЛЕВӐН, ПОНИМАШ полковникӑн, КОЛИСНИЧЕНКО полковникӑн, ИСАЕВ полковникӑн, НАСОНОВ полковникӑн, ПАВЛЕНКО подполковникӑн саперӗсем; ҫыхӑну ҫарӗсен генерал-лейтенанчӗн ЛЕОНОВӐН, АГАФОНОВ полковникӑн, ЕГОРОВ полковникӑн, МАКАРЕНКО полковникӑн связисчӗсем чапа тухнӑ.

Тунӑ ҫӗнтерӗве яланлӑха палӑртса хӑварас тесе, КЛУЖ тата СЕГЕД хулисене тытса илессишӗн ҫапӑҫнӑ чухне уйрӑмах чапа тухнӑ соединенисемпе чӑссене «КЛУЖСКИ» тата «СЕГЕДСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградӑлама тӑратас.

Паян, октябрӗн 11-мӗшӗнче, 22 сехетре хамӑр Тӑван ҫӗршыв столици МУСКАВ, икҫӗр ҫирӗм тӑватӑ тупӑпа ҫирӗм хут пӗр харӑс персе, УКРАИНӐРИ 2-мӗш фронтӑн паттӑр ҫарӗсене, КЛУЖ тата СЕГЕД хулисене тытса илнӗскерсене, Тӑван ҫӗршыв ячӗпе салют парать:

Эсир ертсе пыракан ҫарсене, КЛУЖ тата СЕГЕД хулисене ирӗке кӑларассишӗн ҫапӑҫнӑ чухне уйрӑмах чапа тухнӑскерсене, пурне те ҫапӑҫнӑшӑн ТАВ ТӐВАТӐП.

Хамӑр Тӑван ҫӗршывӑн ирӗклӗхӗпе никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн ҫапӑҫса вилнӗ геройсене ӗмӗр-ӗмӗр мухтав!

Нимӗҫ захватчикӗсене вилӗм!

Верховный Главнокомандующи Совет Союзӗн Маршалӗ И. СТАЛИН.

1944 ҫулхи октябрӗн 11-мӗшӗ.

Совет Украининчи колхозниксемпе колхозницӑсем, МТС-семпе совхозсенчи рабочисем тата ялхуҫалӑх специалисчӗсем ССР Союзӗнчи мӗнпур колхозниксемпе колхозницӑсене, МТС-семпе совхозсенчи работниксене, мӗнпур ялхуҫалӑх специалисчӗсене

ЧӖНСЕ КАЛАНИ

Хаклӑ юлташсем!

Пирӗн паттӑр Хӗрлӗ Ҫар, Совет Союзӗн Маршалӗ аслӑ Сталин генилле ертсе пынипе, ылханлӑ тӑшмана аркатса пырса, тӑван Совет Украинине фашистла чуралӑхран пӗтӗмӗшпех ирӗке кӑларчӗ.

Эпир, колхозниксемпе колхозницӑсем, МТС-семпе совхозсенчи рабочисем, фашистла нимӗҫ палачӗсемпе вӗсен ирсӗр тарҫисен — украинла-нимӗҫле националистсен тискер те юнлӑ ӗҫӗсене, вӗсем Украина халӑхне мӑшкӑлласа асаплантарнине, пирӗн чаплӑ хуласемпе ялсене, заводсемпе шахтӑсене, колхозсемпе совхозсене ҫунтара-ҫунтара янине тата ишӗлтерсе пӗтернине нихҫан та манмӑпӑр. Ылханлӑ захватчиксем Совет Украинин пархатарлӑ ҫӗрне пирӗн чи лайӑх ҫынсен юнӗпе тата куҫҫулӗпе шӳтерчӗҫ.

Фашистла тискер кайӑксем Васильковпа Золотоноша патӗнче, Тростянецпа Купянск патӗнче пирӗн аттесемпе аннесене, пирӗн ывӑл-хӗрсене чӗрӗллех ҫӗр айне чавса пытарнине эпир нихҫан та манмӑпӑр. Нимӗҫ захватчикӗсем Киевра, Полтавӑра, Черниговра, Донбасра, Харьковра тата Совет Украинин ытти хулисемпе ялӗсенче тунӑ тискер ӗҫсене, ҫав хуласемпе ялсене хӑрушла ишӗлтерсе пӗтернине эпир нихҫан та манмӑпӑр.

Украина халӑхӗ хӑйӗн мӑнаҫлӑ пуҫне нимӗҫ пусмӑрҫисем умӗнче таймарӗ. Унӑн паттӑр ывӑлӗсем, Хӗрлӗ Ҫар ретӗнче, партизансен отрячӗсенче тӑрса, хамӑрӑн чаплӑ тӑван ҫӗршывӑн чыслӑхӗпе никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн, ирӗклӗхӗпе социализмла стройӗшӗн пӗтӗм вӑя хурса кӗрешнӗ, кӗрешеҫҫӗ те. Украина партизанӗсен Сидор Ковпак, Алексей Федоров, Александр Сабуров, Антон Одух тата ытти паттӑрсем командир пулса ертсе пыракан отрячӗсемпе соединенийӗсен геройла ӗҫӗсем ҫинчен пӗтӗм совет халӑхӗ пӗлет.

Халӗ ӗнтӗ Украина кӗлпе кӑмрӑк тата ишӗлчӗк айӗнчен ҫӗнӗрен чӗрӗлсе тӑрать. Унӑн халӑх хуҫалӑхӗ хӑвӑрт юсанса пырать. Ҫулталӑк та тултарман вӑхӑт хушшинче Украинӑра 26.439 колхоза, 1.173 МТС-а юсаса ура ҫине тӑратнӑ, колхозсенчи выльӑх-чӗрлӗхӗн 57.000 фермине тунӑ. ССР Союзӗнчи тӑванла республикӑсен аслӑ ҫемьинче Украина вӑрҫӑчченхинчен те чаплӑнрах та хӑватлӑнрах ӳссе чечекленӗ.

Ылханлӑ тӑшмана хирӗҫ, Совет Украинине ирӗке кӑларассишӗн, унӑн халӑх хуҫалӑхне юсаса ура ҫине тӑратассишӗн пыракан кӗрешӳре пире ҫав тери пысӑк пулӑшу панӑшӑн эпир ССР Союзӗнчи мӗнпур тӑванла халӑхсене, уйрӑмах хамӑрӑн аслӑ тӑвана—вырӑс халӑхне пӗтӗм чун-чӗререн тав тӑватпӑр.

Хамӑра ирӗке кӑларнӑшӑн эпир пирӗн паттӑр Хӗрлӗ Ҫара, хамӑрӑн тӑван Совет влаҫӗпе коммунистсен партине, хаклӑ та юратнӑ аттемӗре — пирӗн аслӑ Сталина пӗтӗм чун-чӗререн хӗрӳллӗн тав тӑватпӑр.

Хамӑрӑн Хӗрлӗ Ҫар тунӑ историллӗ ҫӗнтерӳсемпе хавхаланса, эпир, Совет Украининчи колхозниксемпе колхозницӑсем, МТС-семпе совхозсенчи рабочисем, хамӑр ирӗке тухнӑ малтанхи кунсенчен пуҫласах, вӑрҫӑччен вӑйлӑ тырпулпа, тухӑҫлӑ выльӑх-чӗрлӗхпе чаплӑ пулса тӑнӑ Украина колхозӗсемпе совхозӗсене хӑвӑртрах юсаса ура ҫине тӑратассишӗн социализмлӑ ӑмӑртӑва анлӑн сарса ятӑмӑр. 1944 ҫулта, ирӗке тухнӑ ҫӗр ҫинче вӑйлӑ тырпул туса илес тесе, колхозлӑ ялти ӗҫҫыннисем хӑйсен вӑйӗсене хӗрхенмесӗр ӗҫлерӗҫ.

Совет Украининчи хресченсем, обществӑллӑ хуҫалӑха юсаса ура ҫине тӑратас тӗлӗшпе вӑя хӗрхенмесӗр ӗҫлесе, хӑйсем хушшинчен социализмлӑ ӗҫӗн чӑн-чӑн паттӑрӗсене ҫуратса кӑларчӗҫ. Пирӗн Тӑван ҫӗршыв ҫӗнӗ ятсемпе — Паша Ярмоленко, Елена Хобта, Даша Авраменко, Анна Батова, Яков Шульга, Евграф Петровский, Мария Кутова, Варвара Сахно ячӗсемпе паллашрӗ. Ҫавӑн пек малта пыракан ҫынсен йышӗ кунран кун ӳссе пырать. Вӗсем хӑйсен ӗҫӗпе Сталин пӑхса ҫитӗнтернӗ ҫынсен — Украинӑри стахановецсен чапӗпе мухтавне татах та ытларах ӳстереҫҫӗ, колхоз стройӗн никам ҫӗнтерейми хӑватне тӗреклетеҫҫӗ.

Фронтпа тӑван ҫӗршыва тырпулпа ытти тӗрлӗ ялхуҫалӑх продукчӗсем ытларах парас тесе, эпир мӗн кирлине пӗтӗмпех турӑмӑр. Ҫак задачӑна эпир ӑнӑҫлӑн пурнӑҫа кӗртрӗмӗр.

Пирӗн ӗҫ сая каймарӗ: эпир пуян тырпул туса илсе, ӑна ӑнӑҫлӑн пухса кӗртрӗмӗр.

Халӗ эпир вырса илнӗ тырпула — ҫӗнтерӳ тырпулне ҫапатпӑр, кӗрхи тырӑсене акса пӗтерессишӗн кӗрешетпӗр. Хамӑрӑн тӑван ҫӗршыва уйрӑмах халӗ, фашистла нимӗҫ захватчикӗсене хирӗҫ пыракан вӑрҫӑн татаклӑ тапхӑрӗнче, нумай тырпул кирлине эпир пӗлетпӗр. Паянхи кун, тӑшманпа кӗрешес ӗҫре, хамӑрӑн хуҫалӑха малалла юсаса пырас тата хамӑрӑн тӑван ҫӗршывӑн хӑватне тӗреклетес ӗҫре тырпул нимӗнпе улӑштарма ҫук хӗҫпӑшал пулса тӑрать. Ҫав вӑхӑтрах эпир ыранхи куншӑн та тӑрӑшатпӑр. Кӗрхи тырӑсене ытларах акса хӑварас тесе, государствӑн кӗрхи тырӑсем акмалли тата кӗрхи ҫӗртме тумалли планне тултарма кӑна мар, ирттерсе тултарма мӗнпур вӑя хурапӑр.

Хамӑрӑн колхоз ӗҫӗнче эпир совет воинӗсен фронтри паттӑр ӗҫӗсенчен юлмӑпӑр. Государство умӗнчи пӗрремӗш тивӗҫе эпир чыслӑн пурнӑҫа кӗртӗпӗр, государствӑна обязательствӑсем тӑрӑх памалли тырра, МТС ӗҫленӗшӗн натуроплата тӳлемелли тырра вӑхӑтра парса татӑпӑр, совхозсем енӗпе те тырпула ӑнӑҫлӑн парса татӑпӑр.

1944 ҫулхи октябрӗн 5-мӗшӗ тӗлне государствӑна тырӑ памалли плана Украина 88,4 процент чухлӗ тултарнӑ, Житомир, Киев, Каменец-Подольск, Кировоград тата Чернигов облаҫӗсенчи колхозсем вара государствӑна тырӑ памалли хӑйсен обязательствисене пӗтӗмӗшпех тултарчӗҫ те ӗнтӗ.

Юлташсем!

Пирӗншӗн — Украинӑри колхозниксемпе колхозницӑсемшӗн, МТС-семпе совхозсенчи рабочисемпе работницӑсемшӗн государство интересӗсем, фронт интересӗсем пуринчен те ҫӳлте тӑраҫҫӗ. Эпир хамӑрӑн юратнӑ тӑван ҫӗршыв — ССР Союзӗ умӗнчи, Хӗрлӗ Ҫар умӗнчи, Сталин юлташ умӗнчи патриотла тивӗҫе чыслӑн пурнӑҫа кӗртӗпӗр.

Эпир хамӑр енчен ҫаксене тума пулатпӑр:

1. Кӑҫалхи октябрӗн 25-мӗшӗччен государствӑна тырӑ памалли плана пӗтӗмӗшпех тултаратпӑр, МТС-сем ӗҫленӗшӗн тӳлемелли натуроплатӑна пӗтӗмӗшпех тӳлесе тататпӑр. Хӗрлӗ Ҫарӑн тырӑ фондне тырпул пӗтӗмӗшпех хывса ҫитеретпӗр, ҫавӑн пекех тата совхозсем енӗпе те тырӑ парса тататпӑр.

2. 1944 ҫулхи ноябрӗн 1-мӗшӗччен плантан ирттерсе Хӗрлӗ Ҫар фондне 15 миллион пӑт тырӑ паратпӑр.

3. Сахӑр кӑшманне, ҫӗрулмине вӑхӑтра кӑларса пӗтеретпӗр, хӗвелҫаврӑнӑшӗпе кукурузӑна тата ытти тӗрлӗ культурӑсене те вӑхӑтра пухса кӗртетпӗр.

Совет Союзӗнчи мӗнпур колхозсене, колхозниксемпе колхозницӑсене, МТС-семпе совхозсенчи рабочисене, мӗнпур ялхуҫалӑх специалисчӗсене эпир государствӑна тырӑ памалли плана срокчен тултарассишӗн, Хӗрлӗ Ҫар фондне планран ирттерсе тырӑ парассишӗн социализмлӑ ӑмӑрту сарса яма чӗнетпӗр. Эпир кӗркуннехи мӗнпур ялхуҫалӑх ӗҫӗсене ӑнӑҫлӑн вӗҫлессишӗн кӗрешме чӗнетпӗр.

Хаклӑ юлташсем!

Ылханлӑ тӑшмана — фашистла нимӗҫ захватчикӗсене ҫапса аркатас ӗҫре Хӗрлӗ Ҫара хамӑрӑн вӑйсене хӗрхенмесӗр пулӑшса пыма эпир пӗтӗм совет халӑхӗ умӗнче, большевиксен партийӗпе Совет правительстви умӗнче, аслӑ Сталин умӗнче тупа тӑватпӑр. Эпир тӑшмана пуҫӗпех ҫӗнтерес кун инҫе юлмарӗ ӗнтӗ.

Колхоз стройӗн ҫӗнӗ ҫӗнтерӗвӗсемшӗн, пирӗн аслӑ та тӗрӗс ӗҫ пӗтӗмӗшпех ҫӗнтерессишӗн — малалла!

Сывӑ пултӑр пирӗн паттӑр Хӗрлӗ Ҫар!

Сывӑ пултӑр пирӗн Аслӑ Совет Ҫӗршывӗ!

Сывӑ пултӑр ирӗклӗ Совет Украини!

Сывӑ пултӑр чаплӑ полководец, ҫӗнтерӳ Маршалӗ — пирӗн тӑван Сталин!

(Ҫак ҫырӑва Киев, Житомир, Каменец-Подольск, Кировоград, Чернигов, Полтава, Днепропетровск, Запорожье, Харьков, Сталино, Николаев, Одесса, Ворошиловград тата Украина ССР-ӗн ытти облаҫӗсенчи колхозниксемпе колхозницӑсен, МТС-семпе совхозсенчи рабочисемпе работницӑсен пухӑвӗсенче сӳтсе-явса йышӑннӑ).

ПИОНЕР ВОЖАТАЙӖСЕН ШКУЛӖСЕМ

Мускавра, Ленинградра, Бакура, Минскра тата ытти пысӑк хуласенче пионер вожатӑйӗсене вӗрентсе хатӗрлекен шкулсем уҫӑлаҫҫӗ, вӗсенче 4 уйӑх вӗренмелле. Ҫав шкулсем пуҫламӗш тата вӑтам шкулсем валли пионерсем тӗлӗшпе ӗҫлекен старши работниксене вӗрентсе хатӗрлеҫҫӗ. Вӗсенче педагогика институчӗсенчи профессорсемпе доцентсем вӗрентеҫҫӗ. Октябрӗн 15-мӗшӗнче вӗрентме пуҫлаҫҫӗ. Пионер вожатӑйӗсен шкулӗсем Свердловскра, Нежинра, Архангельскра тата Ставропольре ӗҫлеме пуҫланӑ ӗнтӗ. (ТАСС)

«КОММУНАР» ЗАВОД ТУСА КӐЛАРНА ПӖРРЕМӖШ ТРАКТОР МОЛОТИЛКИ

Запорожьери «Коммунар» завод пӗрремӗш трактор молотилкине туса кӑларнӑ. Ҫитес кунсенче ҫавӑн пек молотилкӑсене йышлӑн туса кӑларма пуҫлаҫҫӗ. (ТАСС).

СССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗн Председателӗ И. В. Сталин патӗнче У. Черчилль господинпа А. Иден господина хисеплесе тунӑ ирхи апатлану

Октябрӗн 10-мӗшӗнче СССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗн Председателӗ И. В. Сталин, Великобритани Премьер-Министрне У. Черчилль господина тата Ют ҫӗршыв Ӗҫӗсен Министрне А. Иден господина хисеплесе ирхи апатлану туса ирттернӗ.

Ирхи апатланура ҫаксем пулнӑ: У. Черчилль господин, А. Иден господин, Великобритани Посолӗ А. К. Керр господин, США Посолӗ В. А. Гарриман господин, Канада Посолӗ Д. Уилгресс господин, Австрали Посланникӗ Д. Маломей господин, Ҫӗнӗ Зеланди Посланникӗ Ч. Босвелл господин, Британи Империйӗн Генеральнӑй Штабӗн Начальникӗ А. Брук фельдмаршал, Х. Л. Исмей генерал, Британи Ҫар Миссийӗн Пуҫлӑхӗ М. Баррос генерал-лейтенант, США Ҫар Миссийӗн Пуҫлӑхӗ Д. Дин генерал-майор, Великобритани Посольствин сотрудникӗсем тата У. Черчилльпе А. Иден господинсемпе пӗрле килнӗ ҫынсем, ҫавӑн пекех тата В. М. Молотов, А. И. Микоян, Совет Союзӗн Великобританири Посолӗ Ф. Т. Гусев, флот адмиралӗ Н. Г. Кузнецов, А. Я. Вышинский, В. Г. Деканозов, И. М. Майский, арми генералӗ А. И. Антонов тата СССР Наркоминделӗпе Оборона Халӑх Комиссариачӗн ответлӑ сотрудникӗсем.

СССР Ют ҫӗршыв Ӗҫӗсен Халӑх Комиссарӗ В. М. Молотов патӗнче пулнӑ йышӑну

Октябрӗн 11-мӗшӗнче, Великобритани Премьер-Министрне У. Черчилль господина тата Ют ҫӗршыв Ӗҫӗсен Министрне А. Иден господина хисеплесе, СССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗн Председателӗн Заместителӗ тата Ют ҫӗршыв Ӗҫӗсен Халӑх Комиссарӗ В. М. Молотов дипломати корпусне йышӑннӑ. Йышӑнура союзлӑ тата нейтральнӑй ҫӗршывсен посольствисемпе миссийӗсен пуҫлӑхӗсемпе ответлӑ сотрудникӗсем, ҫар, тинӗс-ҫар тата авиаци атташисемпе вӗсен помощникӗсем тата ҫар миссийӗсен начальникӗсемпе членӗсем пулнӑ.

Йышӑнура тата ҫаксем пулнӑ: А. И. Микоян, Совет Союзӗн Великобританири Посолӗ Ф. Т. Гусев, флот адмиралӗ Н. Г. Кузнецов, А. Я. Вышинский, В. Г. Деканозов, С. А. Лозовский, М. М. Литвинов, И. Н. Майский, авиацин Главнӑй Маршалӗ А. А. Новиков, бронетанковӑй ҫарсен Маршалӗ Я. М. Федоренко, инженери ҫарӗсен Маршалӗ М. П. Воробьев, РСФСР Ют ҫӗршыв Ӗҫӗсен Халӑх Комиссарӗ А. И. Лаврентьев, Азербайджан ССР-ӗн Ют ҫӗршыв Ӗҫӗсен Халӑх Комиссарӗ М. И. Алиев, Совет Союзӗн Халӑх Комиссарӗсем, Оборона Халӑх Комиссариачӗн, Тинӗс-ҫар флочӗн Халӑх Комиссариачӗн, СССР Наркоминделӗн, СССР Наркомвнешторгӗн тата ыттисен ответлӑ работникӗсем, ҫавӑн пекех тата ученӑйсем, писательсем, артистсем, совет пичечӗпе ют ҫӗршывсен пичечӗн представителӗсем.

Британи Посолӗ А. К. Керр господин патӗнче СССР Совнаркомӗн Председательне И. В. Сталина тата Премьер-Министра У. Черчилль господина хисеплесе тунӑ апатлану

Октябрӗн 11-мӗшӗнче Британи Посолӗ Арчибальд К. Керр господин Британи Посольствинче, СССР Совнаркомӗн Председательне И. В. Сталина тата Премьер-Министра У. Черчилль господина хисеплесе, апатлану туса ирттернӗ.

Апатланура ҫаксем пулнӑ: И. В. Сталин, Уинстон Черчилль господин, В. М. Молотов, А. Иден господин, США Посолӗ В. А. Гарриман господин, Канада Посолӗ Д. Уилгресс господин, Австрали Посланникӗ Д. Маломей господин, Ҫӗнӗ Зеланди Посланникӗ Ч. Босвелл господин, Тулашри Суту-илӳ Халӑх Комиссарӗ А. И. Микоян, Совет Союзӗн Лондонри Посолӗ Ф. Т. Гусев, Ют ҫӗршыв Ӗҫӗсен Халӑх Комиссарӗн Заместителӗсем А. Я. Вышинский, В. Г. Деканозов, С. А. Лозовский, М. М. Литвинов, И. М. Майский, Империн Генеральнӑй Штабӗн Начальникӗ А. Брук фельдмаршал, Х. Л. Исмей генерал, Британин Ҫар Миссийӗн Пуҫлӑхӗ М. Баррос генерал-лейтенант, Британи Посольствин сотрудникӗсем тата Черчилльпе Иден господинсемпе пӗрле килнӗ ҫынсем.

Апатлану хыҫҫӑн пулса иртнӗ йышӑнура ҫаксем пулнӑ: СССР Наркоминделӗн ответлӑ сотрудникӗсем, США-па Канада Посольствисен, Австралипе Ҫӗнӗ Зеланди Миссийӗсен, ҫавӑн пекех тата Британипе Америкӑн Ҫар Миссийӗсен сотрудникӗсем.

ҪӖР АЙӖНЧЕ ПИН ҪУЛ ВЫРТНА ЯПАЛАСЕНЕ ТУПНА

Ҫак кунсенче СССР Наука академийӗн Киргиз ССР-ӗнчи филиалӗн Наци культури музейне (Фрунзе хули) Каганович районӗнче пурӑнакан ҫын, Отечественнӑй вӑрҫӑ инвалидӗ Бессарабов пынӑ. Вӑл 15 ылттӑн укҫа тата илемлетнӗ ылттӑн япаласемпе кӗмӗл япаласем илсе пынӑ. Вӗсене вӑл пахчара ӗҫленӗ чухне тупнӑ. Ҫав япаласем тӑм чӳлмекре выртнӑ, чӳлмекӗ кӑшт пырса тивсенех ҫӗмӗрӗлсе кайнӑ. Археологсем каланӑ тӑрӑх, ҫав япаласем наука енчен питӗ паха пулса тӑраҫҫӗ. Ылттӑнтан тунисене пин ҫул каялла тунӑ, теҫҫӗ. Пуринчен ытларах хӗрарӑмсен пуҫа тӑхӑнмаллине илемлетекен япаласем тата ҫӗрӗсем интереслӑ, ҫӗрӗсем ҫине чечексем тата чи авалхи тӗрӗ ӳкернӗ. (ТАСС).



Сталинла преми лауреачӗ, СССР-ти Наука Академийӗн Президенчӗ, СССР Верховный Совечӗн депутачӗ В. Л. Комаров паян 75 ҫул тултарать.

Ӳкерчӗк ҫинче: Владимир Леонтьевич Комаров.

М. МАРКОВ фотоӳкерчӗкӗ. (ТАСС фотохроники).

ССР Союзӗнчи наукӑсен Академийӗн президентне— Владимир Леонтьевич КОМАРОВ академика

Чӑваш АССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗпе ВКП(б) Чӑваш Область Комитечӗ Сире, Владимир Леонтьевич, Эсир ҫуралнӑранпа 75 ҫул тултарнӑ ятпа, наукӑпа педагогика тата общество ӗҫӗнче 50 ҫул хушши ӗҫленӗ май ырӑ сывлӑх сунаҫҫӗ.

Чӑваш халӑхӗ Сире, Владимир Леонтьевич, малта пыракан совет наукин чаплӑ ҫыннисенчен пӗри, хамӑрӑн Аслӑ Тӑван ҫӗршыва пӗтӗм чун-чӗререн парӑннӑ патриот вырӑнне хурса саламлать, совет наукине малалла аталанса пыни тата совет наукин центрти штабӗн—Пӗтӗм Союзри Наукӑсен Академийӗн ӗҫӗ Сирӗн ятӑрпа таччӑн ҫыхӑнса тӑрать.

Чӑваш АССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗпе ВКП(б) Чӑваш Область Комитечӗ Сире совет наукине малалла аталантарса пырассишӗн нумай ҫул хушши пултаруллӑн ӗҫлеме ырӑ сунаҫҫӗ.

Чӑваш АССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗн Председателӗ А. МАТВЕЕВ.	ВКП(б) Чӑваш Обкомӗн Секретарӗ И. ЧАРЫКОВ.

ЛАТВИ ХРЕСЧЕНӖСЕНЕ ҪӖР ТАВӐРСА ПАРАҪҪӖ

Латви хресченӗсем нимӗҫ захватчикӗсем туртса илнӗ ҫӗре халь каялла илеҫҫӗ. Ирӗке кӑларнӑ виҫӗ уездра кӑна—Даугавпилс, Резекне тата Луда уезчӗсенче хресченсем 11 пин гектар ытла ҫӗр илнӗ. Ҫӗр панипе пӗрлех хресчен хуҫалӑхӗсене выльӑх-чӗрлӗхпе ялхуҫалӑх инвентарӗ туянма тата ҫуртсем тума 7 ҫуллӑха 10.000 тенкӗ укҫа кивҫен параҫҫӗ.

Хресченсене ҫӗр пани пур ҫӗрте те халӑхӑн пысӑк уявӗ пек пулса иртет. Пур ҫӗрте те митингсем пулса иртеҫҫӗ. Латви хресченӗсем хӑйсене нимӗҫ пусмӑрӗнчен ирӗке кӑларнӑшӑн тата хӑйсен ирӗклӗн ӗҫлемелли правине таврӑса панӑшӑн Хӗрлӗ Ҫара тав тӑваҫҫӗ. (ТАСС).

Совет Информаци Бюровӗнчен

ОКТЯБРӖН 10-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Октябрӗн 10-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем САРЕМА (ЭЗЕЛЬ) утравӗ ҫинче ҫав утравӑн кӑнтӑр хӗррисене тӑшмантан тасатасшӑн ҫапӑҫнӑ.

РИГА хули енче пирӗн ҫарсем малалла тапӑнса пынӑ, халӑх пурӑнакан 60 пункта ытла туртса илнӗ, вӑл шутра — ДИПТЕРИ, ИЛЬТЕНЫ, ГАРКАЛНЕ, РОПАЖИ, ЧАПАС, РОТКАЛИ, МЕЛТЕРТЫ, СТОПИНИ, БЛАНКАС, ДУПАС ятлӑ пысӑк ялсем тата ЛИЛАСТЕ, ГАУЯ, РОПАЖИ, ИШКШТИЛЭ, САУЛКАЛНЕ ятлӑ чугун ҫул станцийӗсем.

КЛАЙПЕДА (МЕМЕЛЬ) хулинчен ҫурҫӗртерехре тата кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫнерехре пирӗн ҫарсем ӑнӑҫлӑ наступление вӑйлатса пынӑ, Литва ССР-ӗн уезд центрӗсене КРЕТИНГЕН хулипе чугун ҫул узелне, ТАУРОГЕН хулипе пысӑк чугун ҫул станцине туртса илнӗ, ҫавӑн пекех тата, тӑшманпа ҫапӑҫса, халӑх пурӑнакан ытти 300 пункта ытла йышӑннӑ, вӑл шутра — ВАЙНЬОДЭ, АЛЕКСАНДРИЯ, МОСЕДИС, ЛЕНКИМАЙ, СТАРЫЙ ИЦИЛТИС, ГЛУШЛАУКИС, САЛАНТАЙ, ДАРБЕНАЙ, ГОРЖДЫ, ШВЕКШНИ, ГОРДОМЫ, АЛЕКСАНДРОВСКОЕ, ДЕГУЦЕ, ДРАВДЯНЫ, ПРИШМОНТЫ, ТАУРАЙ ятлӑ пысӑк ялсем тата ВАЛЬНИОДЭ, ПАЛУКНЭ, МЕДИНИНКАЙ, НАВЯСЕДЗЯЙ, ДАРРБЕНАЙ, ТУБАВСЕ, ШАШТЕЙКИ, КОРИЯНЫ, ВАВЕРАЙЦЕ, КЛИБИ ятлӑ чугун ҫул станцийӗсем.

Пирӗн ҫарсем ЛЕПАЯ (ЛИБАВА) хулинчен кӑнтӑртарахра Балтика тинӗсӗ хӗррине тухнӑ, ПАЛАНГА хулине туртса илнӗ. Ҫапла ӗнтӗ, пирӗн ҫарсем РИГА—ЛИБАВА—ВИНДАВА хулисен районӗнче вӑрҫакан фашистла нимӗҫ ҫарӗсен группировкин Хӗвелтухӑҫ Пруссие чакмалли ҫулӗсене татнӑ.

КАУНАС хулинчен хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем, тӑшманпа ҫапӑҫса, Литва ССР-ӗн уезд центрне ШАКЯЙ хулине туртса илнӗ.

Ҫурҫӗр Трансильванире РЕГИН хулинчен хӗвеланӑҫнерехре тата кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем, Румыни ҫарӗсемпе пӗрле кӗрешсе, халӑх пурӑнакан 50 пункта ытла туртса илнӗ, вӑл шутра—ГОРЕНЫ, ДЕДРАД, МКЭЭ-ЭРМЕНЬЕШ, МЕЗЭПАГОЧА, МЕЗЭ-ШАЛЬИ, ЦИГАРЕНЫ, АНТОН, ФЕЛЕАЧУЛ (КЛУЖ хулинчен 5 километр кӑнтӑртарахра), ВЛАХА, СОМЕШУЛ-РЕЧЕ ятлӑ пысӑк ялсем.

Венгрире ДЕБРЕЦЕН хулинчен кӑнтӑртарахра пирӗн ҫарсем ҫаплах наступлени туса пынӑ. ДЕРЕЧКЕ хулипе чугун ҫул станцине тата КОНЬЯР, БОЧАЙ, ЕСТАР, ХЕНЦИДА ялӗсене туртса илнӗ. Пирӗн ҫарсем ДЕБРЕЦЕН хули патне тачӑнах пырса тухнӑ, тӑшманпа хула тулашӗнче ҫапӑҫма пуҫланӑ.

Югослави ҫӗрӗнче ПОЖАРЕВАЦ хулинчен кӑнтӑртарахра тата кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫнерехре пирӗн ҫарсем, Югослави халӑхӗн ирӗклӗх ҫарӗн чаҫӗсемпе пӗрле кӗрешсе, ПАНКОВО, ЖАБАРИ, ВЕЛИКА ПЛАНА, ИЗВАРИЦА, РАВНА РЕКА, ЛУКОВО, ВОЛЕВАЦ ятлӑ ялсене тата ВЕЛИКА ПЛАНА ятлӑ узловой чугун ҫул станцине туртса илнӗ. Ҫапла ӗнтӗ, пирӗн ҫарсем НИШ хулипе БЕЛГРАД хули хушшинчи чугун ҫулпа шоссе ҫулне татнӑ. Фронтӑн ку участокӗнче пирӗн ҫарсем октябрӗн 8-мӗшӗпе 9-мӗшӗнче 3.200 нимӗҫ салтакӗпе офицерне тыткӑна илнӗ.

Фронтӑн ытти участокӗсенче разведчиксем шыраса ҫӳренӗ тата чылай пунктсенче тӗллӗн-тӗллӗн ҫапӑҫнӑ.

Октябрӗн 9-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем мӗнпур фронтсенче нимӗҫсен 106 танкне ҫӗмӗрсе тӑкнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата зенитнӑй артиллери тӑшманӑн 78 самолетне персе ӳкернӗ.

☆ ☆ ☆

ПИРЕН АВИАЦИ ЛЕПАЯ (ЛИБАВА) ПОРТНЕ ТАТА РИГА ПОРТНЕ ЙЫШЛӐН ВӖҪСЕ КАЙСА ТАПАННИ

Октябрӗн 10-мӗшӗ ыран тенӗ чух ҫӗрле пирӗн инҫене вӗҫекен авиаци Лепая (Либава) портне тата Рига портне йышлӑн вӗҫсе кайса тапӑннӑ. Нимӗҫсен ҫав портсенчи транспорчӗсем ҫине, ҫавӑн пекех тата ҫар склачӗсемпе чугун ҫул станцийӗсенчи эшелонӗсем ҫине бомбӑсем пӑрахнӑ.

Лепая (Либава) портӗнче тапӑну вӑхӑтӗнче нимӗҫсен 12 транспорчӗ тӑнӑ. Бомбӑсем пӑрахнине пула, портра вӑйлӑ пушарсем тухнӑ, пушарсенче взрывсем пулнӑ. Ҫавӑн пекех питӗ вӑйлӑ взрыв чугун ҫул станцийӗ районӗнче пулнӑ. Пушарсемпе взрывсене пирӗн летчиксем Лепая (Либава) хулинчен 200 километр каялла вӗҫсе кайсан та асӑрхаса пынӑ.

Рига портӗнче, бомбӑсем пӑрахнине пула, пушарсем йышлӑ тухнӑ. Вӑйлӑ пушарсем экспорт гаванӗ районӗнче тухнӑ, гавань причалӗсем патӗнче вӑл вӑхӑтра нимӗҫсен виҫӗ транспорчӗ тӑнӑ.

Ӗнер, октябрӗн 9-мӗшӗнче, Хӗрлӗ Ялавлӑ Балтика флочӗн летчикӗсем Рига заливӗнче нимӗҫсен икӗ транспортне, пӗр тральщикне, хурал катерне тата ытти карапӗсене те шыва путарнӑ. Нимӗҫсен темиҫе транспортне вӑйлӑ сиенленӗ.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Парторганизаци ялхуçалăх çулне ăнăçлăн вĕçлессишĕн кĕрешет

Ялхуçалăхĕнче ĕçлекен коммунистсен хисеплĕ задачи вăл — колхозсемпе совхозсене тата МТС-сене тухăçлă тырпул туса илме, вырăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана тултарма, çапла вара фронтпа çĕршыв валли апат-çимĕç, промышленность валли чĕрттавар çителĕклĕ парса тăма пулăшасси пулать. Шăхасан районĕнчи Мами ялсоветĕнчи коммунистсем çавна тĕрĕс ăнланса илнине хăйсен кулленхи ĕçĕпе çирĕплетсе пыраççĕ.

Ялсовет территорийĕнче пурĕ 4 колхоз. Парторганизаци, колхозсенчи ĕçе тĕрĕс йĕркелеме пулăшас шутпа, коммунистсене уйрăм ĕçсем хушнă. Виçĕ коммунист — колхоз председателĕсем пулса, ыттисем тĕрлĕ участоксенче ĕçлеççĕ. Вĕсем комсомолецсемпе ялти актива ĕçе анлăн явăçтарса пыраççĕ, колхозниксене хастарлăн ĕçлеме мобилизацилеççĕ. Колхоз председателĕсем пулса ĕçлекен коммунистсем Васильев, Кондратьев, Николаев юлташсем, колхозри ĕçе тĕрĕс организацилессишĕн тăрăшнипе пĕрлех, массăллă-политикăллă ĕçе ăнăçлăн йĕркелесе пыраççĕ. Вĕсем — агитаторсем. Колхозниксене юлашки хыпарсене пĕлтерсе тăраççĕ, партипе правительствăн решенийĕсене ăнлантарса параççĕ, малта пыракан колхозниксен опытне сараççĕ.

Парторганизаци секретарĕ коммунистсем хăйсене хушнă ĕçсене мĕнле пурнăçласа пынине тĕрĕслет, колхоз пурнăçĕнчи ыйтусене коммунистсен пухăвĕсенче сÿтсе-явма вăхăтра лартать. ВКП(б) Центральный Комитечĕпе СССР Совнаркомĕ 1944 çулта тырпул пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлесси çинчен постановлени кăларсанах, ăна коммунистсен пухăвĕнче сÿтсе-явнă, татăклă мероприятисем палăртса хăварнă. Çав мероприятисемпе колхозниксене тĕплĕн паллаштарса, вĕсене хастарлăн ĕçлеме мобилизациленĕ. Колхозсем хушшинче социализмлă ăмăртăва анлăн сарса пынине тата ĕçе сдельщина йĕркипе организациленине пула, ялсовет территорине кĕрекен колхозсенчи нумай колхозниксем стахановла ĕçлеççĕ. «Красный партизан» колхозри А. Димитриева, К. Андреева, Р. Иванова, Г. Игнатьев, Н. Алексеев, Н. Ильина; Ворошилов ячĕпе тăракан колхозри М. Семенова, К. Якимова; Молотов ячĕпе тăракан колхозри М. Терентьева, Н. Михайлов; «Активист» колхозри Г. Андреев, М. Трифонова тата ытти нумай юлташсем кулленех икĕ-виçĕ норма тултарса пынă. Вĕсен ĕçĕсем çинчен колхозниксен пухăвĕсенче каласа панă, стена хаçачĕсенче çырнă. Çапла вара ялсовет территорийĕнчи колхозсем тырпула кĕске срокра та пĕр тăккаламасăр, районри ытти колхозсенчен малтан пухса кĕртнĕ. Вырнă тырра çапса, государствăна сентябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне парса татнă. Çитес çулшăн та тырă чылай панă.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана та пур колхозсем те тултарнă. Аслă конюхсемпе ферма заведующийĕсем Тарасов, Ильина, Ермолаев, Орлов, Миронов, Семенов, Александров тата Григорьев юлташсем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес енĕпе тăрăшса ĕçлеççĕ. Выльăх-чĕрлĕх валли хĕл каçмалăх апат хатĕрленĕ, силос хывмалли плана тултарнă. Витесене ăшă каймалла мар туса юсанă. Государствăна аш-какай, сĕт-çу, çăмарта, тир памалли плана ытлашшипех тултарнă. Çакăншăн Ворошилов ячĕпе тăракан колхоза Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне панă.

Анчах парторганизаци ĕçĕнче çитменлĕхсем те пур-ха. Коммунистсем хăйсен политикăллă пĕлĕвне ÿстерес енĕпе сахал ĕçлеççĕ. Агитаторсене вĕрентес ĕçе кирлĕ вырăна лартман. Колхоз клубĕсем начар ĕçлеççĕ. Çамрăк коммунистсемпе ĕçлесси тата парти ретне çĕнĕрен çынсем илесси çителĕксĕр пулса пырать.

Парторганизаци комсомол организацине ертсе пырас ĕçе кирлĕ вырăна лартман. Çавăнпа та комсомолецсен йышĕ вăрахăн ÿсет. Çак çитменлĕхсене пĕтерни парторганизаци пултарулăхне татах та ытларах çĕклеме май парать.

А. АНТОНОВ.

СССР орденĕсемпе медалĕсене тата Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотисене пани

1944 çулхи октябрĕн 10-мĕшĕнче Шупашкарта СССР Верховный Совет депутачĕ, Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ **З. А. Андреева** юлташ малтан наградăланă юлташсене правительство наградисене пачĕ.

Правительство заданийĕсене ăнăçлăн пурнăçа кĕртнĕшĕн Отечественнăй вăрçăн иккĕмĕш степеньлĕ орденне летчик **Л. П. Федоров**, «Знак почета» орденне — малтан фабрика начальникĕ пулса ĕçленĕ, халĕ Чăваш АССР Шалти ĕçсен Халăх Комиссариачĕн сотрудникĕ пулса ĕçлекен **А. П. Громов**, «За трудовое отличие» медале — Стройконторăри плотниксен бригадирĕ **К. П. Макаров** юлташсем илчĕç.

Шкулти вĕрентÿпе воспитани тата общественнăй ĕçсенче тунă çитĕнÿсемшĕн Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотисене çак учительсем илчĕç: НКВД-ăн Шупашкарти ĕç колонийĕ çумĕнчи 7 çул вĕренмелли шкулăн учителĕ **М. Н. Локотников**, çак шкулти вĕренÿ пайĕн начальникĕ **П. Н. Никитин**, Шупашкарти 7 çул вĕренмелли чăваш шкулĕн учительници **В. В. Чернова**, Чăваш АССР Çутĕç Халăх Комиссариачĕн укçатенкĕ управленийĕн начальникĕ **А. А. Богатырева** юлташсем илчĕç.

Ун хыççăн Хисеплĕ грамотăсене Чăваш АССР Сывлăха Сыхлав Халăх Комиссариачĕн работникĕсем, пурĕ 15 çын, илчĕç. Вĕсен шутĕнче — Сĕнтĕрвăрринчи больницăн трахоматознăй сестри **Л. П. Виноградова**, Шупашкар районĕнчи Шĕмшер участокĕнчи больницăн заведующийĕ **В. Д. Демидов**, Советски больницинчи акушерка **О. Е. Ефимова** тата ыттисем те.

Ялхуçалăхĕнче ăнăçлăн ĕçленĕшĕн Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн çĕрйĕркелÿ инспекторĕ **Н. А. Пигузов** тата ВКП(б) Чăваш Обкомĕн ялхуçалăх отделĕн инструкторĕ **Г. Т. Тимофеев** юлташсем Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотине илчĕç.

Çавăн пекех тата производствăра пĕтĕм вăя хурса ĕçленĕшĕн Шупашкарти лесохимартельти кашăксем тăвакан **М. Ф. Железов**, Вырăнти промышленность Халăх Комиссариачĕн производствăпа техника отделĕн начальникĕ **Г. Ф. Ургалкин** юлташсем те Хисеплĕ грамота илчĕç.

Награда илнисем хăйсен ĕçĕсене пысăка хурса хакланăшăн правительствăна тав турĕç, малашне тата лайăхрах ĕçлеме сăмах пачĕç.

Юлашкинчен Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. А. Андреева юлташ награда илнисене награда илнĕ ятпа саламларĕ, малалла тата пысăкрах ÿсĕмсем тума сунчĕ.

Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăрту

Пĕр пек профессисене ĕçлекенсен ăмăртăвĕ

КУСЛАВККА. [illegible]

В. КАРПОВ.

Нормăна тултарайманнисен йышĕ чакса пырать

ÇĔМĔРЛЕ, октябрĕн 12-мĕшĕ (Телефонпа). [illegible]

П. ИЛЛАРИОНОВ.

„Броневик" колхозăн çыннисемпе ĕçĕсем

[illegible]

амбарсене хывнă. Кăçал кунта нумай çул хушши ÿсекен курăк вăррисене те çителĕклĕ хатĕрлеççĕ.

Тырпул пухса кĕртнĕ вăхăтрах выльăх-чĕрлĕх витисене хĕле хатĕрлеме тытăннă. Сысна витине малтанхи çĕртен урăх вырăна куçарса, юсаса лартнă. Халĕ ĕнесем хупмалли çурта, лаша витине ăшă тытмалла туса юсаççĕ.

Колхоз выльăхсене хĕл каçарма апат çителĕклĕ хатĕрленĕ. Улăх утипе клевер кăна 180 центнер пур.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана чăхчĕпсĕр пуçне пĕтĕмпех тултарнă. Лашасем планпа пăхнинчен йышлăрах. Кăçал 6 кĕсререн 6 тиха пăхса çитĕнтернĕ. И. Гордеевпа Н. Павлов конюхсем лашасене юратса пăхаççĕ.

Колхозра шут ĕçне те лайăх йĕркеленĕ. Счетовод пулса Отечественнăй вăрçă участникĕ П. Иванов юлташ ĕçлет. Вăл колхозниксен ĕçкунне вăхăтра тата тĕрĕс шута илсе пырать. Çавăнпа колхозниксем хăйсем миçе ĕçкунĕ тунине лайăх пĕлсе тăраççĕ, хавхаланса ĕçлеççĕ. Колхозра ĕçкунĕсен минимумне тултарман колхозник пачах та çук, нумайăшĕсем минимума 2 хут ирттерсе тултарнă.

«Броневик» колхоза Отечественнăй вăрçă инваличĕ Григорий Матвеевич Матвеев юлташ ертсе пырать. Вăл ертсе пынипе, колхоз кăçалхипе 3-мĕш çул ĕнтĕ тырпула пĕр тăкаксăр, таврари колхозсенчен чылай малтан пухса кĕртет.

— Пирĕн тырă фронтпа çĕршыва памалăх та, колхозниксене çулталăк пурăнмалăх та çитет,—тет колхоз председателĕ Г. Матвеев юлташ.

Çапла ĕçлесе пурăнаççĕ «Броневик» колхоз членĕсем вăрçă кунĕсенче.

Т. ИВАНОВ. (Хамăр корр.).

МУРКАШ.

Çĕнтерÿ фондне ытларах тырпул хывар!

РЕСПУБЛИКĂРИ РАЙОНСЕН ГОСУДАРСТВĂНА СРОКЧĔН ТЫРĂ ПАРСА ТАТАССИШĔН ПЫРАКАН ĂМĂРТĂВĔ (1944 ÇУЛХИ ОКТЯБРĔН 10-МĔШĔ ТĔЛНЕ ИЛНĔ СВЕДЕНИСЕМ ТĂРĂХ)

Районсем	Тырă панă (процентпа)
Вăрнар	101,7
Шупашкар	97,1
Калинино	96,8
Чурачăк	95,2
Вăрмар	94,3
Сĕнтĕр	93,8
Ишлей	90,8
Çĕрпÿ	90,3
Муркаш	90,1
Элĕк	90,0
Советски	89,6
Красноармейски	89,5
Куславкка	89,4
Етĕрне	85,5
Йĕпреç	85,4
Улатăр	85,0
Октябрьски	84,6
Пăрачкав	82,5
Тăвай	81,2
Шăхасан	80,3
Первомайски	79,8
Елчĕк	79,6
Сĕнтĕрвăрри	79,4
Хĕрлĕ Чутай	78,2
Канаш	76,5
Çĕмĕрле	76,5
Комсомольски	74,0
Кувакино	64,8
Шăмăршă	64,4
Чкаловски	63,0
Чăваш АССР-ĕ тăрăх	85,4

РЕСПУБЛИКĂРИ РАЙОНСЕМ КĔРХИ ÇĔРТМЕ ТУМАЛЛИ ПЛАНА ОКТЯБРĔН 10-мĕшĕ ТĔЛНЕ МĔН ЧУХЛЕ ТУЛТАРНИНЕ КĂТАРТАКАН СВОДКА (процентпа)

РАЙОНСЕМ	Плана тултарнă
Элĕк	87,9
Чурачăк	82,9
Шупашкар	80,9
Октябрьски	75,3
Муркаш	75,9
Çĕрпÿ	70,9
Куславкка	70,9
Сĕнтĕрвăрри	68,9
Вăрнар	66,4
Красноармейски	65,7
Ишлей	63,9
Сĕнтĕр	57,3
Вăрмар	57,1
Калинино	54,8
Етĕрне	54,7
Шăхасан	53,9
Канаш	50,2
Елчĕк	46,1
Советски	43,3
Комсомольски	37,3
Йĕпреç	34,1
Первомайски	32,6
Хĕрлĕ Чутай	31,8
Чкаловски	31,1
Шăмăршă	27,8
Çĕмĕрле	20,3
Тăвай	20,1
Улатăр	17,9
Пăрачкав	17,1
Кувакино	8,2
Шупашкар хули	94,8
Пĕтĕмпе	49,8

ПЛАНРАН ИРТТЕРСЕ ХĔРЛĔ ÇАР ФОНДНЕ ТЫРĂ ПАРАÇÇĔ

КÿКЕÇ, октябрĕн 12-мĕшĕ. (ТЕЛЕФОНПА). Районри колхозсем ĕнер, пĕр кун хушшинче, Хĕрлĕ Çар фондне 5700 пăт тырă леçрĕç. Çак тырра хатĕрлев пунктне леçес ĕçе 300 лав ытла хутшăннă.

Хĕрлĕ Çар фондне тырă парасси «Первое мая», «Осоавиахим» колхозсенче уйрăмах ăнăçлă пырать. «Первое мая» колхоз ĕнерхи кун тĕлне 450 пăт, «Осоавиахим» колхоз 240 пăт панă. «Крахмал», «Красная Армия», «Победа» тата Ворошилов ячĕпе тăракан колхозсем кашниех 180-шар пăт тырă пачĕç.

Паян районри колхозсем хăйсем илнĕ обязательствăсем тăрăх Хĕрлĕ Çар фондне тырă парса татаççĕ.

Т. ЛОГИНОВ.
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

* * *

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, октябрĕн 12-мĕшĕ. (ТЕЛЕФОНПА). Шупашкар районĕнчи колхоз председателĕсен канашлăвĕ Хĕрлĕ Çар фондне планран ирттерсе тырă парассине организацилеме чĕнсе каланине районри колхозниксемпе колхозницăсем хапăл туса кĕтсе илчĕç. Кунта Хĕрлĕ Çар фондне районĕпе 10.000 пăт тырă пама йышăнчĕç. Нумай колхозсем çав тырра турттарма та пуçларĕç. Паянхи кун тĕлне 1000 пăт ытла государство склачĕсене леçсе панă. Сталин ячĕпе тăракан колхоз 260 пăт тырă, 100 пăт çĕрулми, «12 лет Окября» колхоз — 345 пăт, Типçырмари «Пахарь» колхоз — 300 пăт, «Красное Сормово» колхоз — 150 пăт, Чапаев ячĕпе тăракан колхоз — 155 пăт тырă Хĕрлĕ Çар фондне панă. Çак мухтава тивĕçлĕ ĕç ытти колхозсенче те пысăк çĕкленÿпе сарăлса пырать.

Н. ГЛАДКОВ.
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

* * *

ОКТЯБРЬСКОЕ, октябрĕн 12-мĕшĕ. (ТЕЛЕФОНПА). Шупашкар районĕнчи колхоз председателĕсем Хĕрлĕ Çар фондне тырă пама чĕнсе калани çинчен илтсенех, колхозсенче пухусемпе канашлусем пулса иртрĕç.

Хĕрлĕ Çар фондне планран ирттерсе Тимошенко ячĕпе тăракан колхоз 16 центнер, «Новый путь» колхоз—19 центнер, «Красная Чувашия» колхоз 25 центнер тырă пачĕç. Çак пархатарлă ĕç ытти колхозсенче те ăнăçлă пырать.

С. РУМЯНЦЕВ.

* * *

ÇĔРПÿ, октябрĕн 12-мĕшĕ. (ТЕЛЕФОНПА). Районри колхозсем государство планне тултарнă хыççăн Хĕрлĕ Çар фондне 10.000 пăт тырă пама пулчĕç. Çак тырра хатĕрлев пункчĕсене леçме пур колхозсенче те тытăннă.

Хаçатсемпе мĕншĕн тĕрĕс усă курмаççĕ?

ВĂРНАР. Ершепуçĕнчи «Трудовик» колхоз районра пур енĕпе те кая юлса пырать.

Пуриншĕн те паллă, колхозниксене ĕçре хавхалантарса пырас тесен, большевикла агитацин пур майĕсемпе те анлăн усă курмалла. Стена хаçачĕсем, боевой листоксем кăларассине, хаçатсем вуласа парассине, колхозниксем хушшинче каласусем ирттерессине йĕркелени кирлĕ. Çакă вăл ĕçе лайăхлатма пулăшать. Анчах «Трудовик» колхозра çак ĕçсем пачах та çук. Кăçал паянхи куна çитсе те пĕр номер стена хаçачĕ те, пĕр боевой листок та тухман. Районран илнĕ макетсене те тĕрлĕ çĕрте çыркаласа пĕтернĕ. Куллен пырса тăракан çĕнĕ хаçатсене колхоз счетоводĕ Зайцев шкафа питĕрсе хурать те, «кивелсен» чĕлĕм туртса çеç пĕтерет.

Пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çар фронтра кулленех чаплă çĕнтерÿсем туса пырать. Колхозниксем çак çĕнтерÿсем çинчен пĕлсе тăччăр тесен, хаçатсемпе тĕрĕс усă курни кирлĕ.

Агитколлектив руководителĕн Наумов тата колхоз председателĕн Белков юлташсен асăннă çитменлĕхсене пĕтермелле.

В. Ш.

Кая юлнисем малтисемпе танлашассишĕн кĕрешеççĕ

Саратов облаçĕнчи Калинин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнма чĕнсе каланине Елчĕк районĕнчи кашни колхозрах пысăк çĕкленÿпе сÿтсе-яваççĕ, ăмăртăва хутшăнса, хăйсем çине конкретлă обязательствăсем илеççĕ. Районри чылай колхозсем илнĕ обязательствăсене пурнăçа кĕртеççĕ те ĕнтĕ. «Марс», «Журавлевка», «Красный восток», Ворошилов ячĕпе тăракан колхозсем кĕрхи çĕртме туса пĕтерчĕç. Ворошилов ячĕпе тăракан колхозăн план тăрăх кĕрхи çĕртме 360 гектар тумаллаччĕ. Кунта килес çул акмалли пĕтĕм çĕр лаптăкне çĕртме тăвас тесе, 420 гектар сухаланă, «Марс» колхоз 430 гектар сухаланă.

Авăн çапасси те уйрăм колхозсенче ăнăçлă пырать. «Осоавиахим» колхоз (председателĕ А. Г. Клементьев юлташ) ялхуçалăх ĕçĕсене уйрăмах пысăк хăвăртлăхпа тата лайăх пахалăхпа туса пырать. Çак колхоз авăн çапса, çĕрулми кăларса, кантăр татса пĕтерчĕ. Кантăра çапса шыва хутнă. Ун хыççăн «Ново-Ищеряково» колхоз пырать. Колхоз председателĕ Егоров юлташ, уяр çанталăкпа туллин усă курас тесе, кунĕн-çĕрĕн авăн çапассине организацилерĕ, çапла вара авăна вăхăтра çапса пĕтерсе малти вырăна тухрĕ. Пушкин ячĕпе тăракан колхоз та, ĕçе тĕрĕс организациленине пула, авăн çапассине ăнăçлăн вĕçлерĕ.

Чылай колхозсем, государствăна обязательство тăрăх тырă парса татса, 1945 çулшăн та аванс шучĕпе параççĕ. Крупская ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ Лявин юлташ) 1945 çулшăн 1704 пăт, «Марс» колхоз — 1800 пăт, Пушкин ячĕпе тăракан колхоз 500 пăта яхăн пачĕç. Тимирязев ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ А. Е. Лазарев юлташ) çулран-çул юлса пыратчĕ. Кăçал çак колхозра пур ĕçе те вăхăтра тата лайăх пахалăхпа туса пыраççĕ. Государствăна тырă вăхăтра парса татнă тата 1945 çулшăн та 270 пăт панă. Паян-ыран кунта авăн çапса пĕтереççĕ.

Анчах та районра юлса пыракан колхозсем сахал мар-ха. Уйрăмăнах «Коммунист», «Авангард», «Малалла», Карл Маркс тата Чкалов ячĕсемпе тăракан колхозсем вăрахăн ĕçлеççĕ. Çак колхозсем района малти вырăна тухма чăрмантараççĕ. Тĕмер, Хăвăл Çырма ялĕсенчи колхозсем те çаплипех юлса пыраççĕ-ха.

Çак колхозсене мала кăларас шутпа, малта пыракан колхозсенчен туртăм тата ĕç вăйĕ ярса пулăшатпăр. Кая юлнă колхозсем, Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнса, малтисемпе танлашассишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлеççĕ.

Шупашкар районĕнчи колхоз председателĕсен канашлăвĕ Хĕрлĕ Çар фондне планран ирттерсе тырă хывма чĕнсе каланине пур колхозсенче те ăшшăн кĕтсе илчĕç. Уйрăм колхозсенчен илнĕ хыпарсем тăрăх, колхозсем Хĕрлĕ Çар фондне 5000 пăта яхăн пама йышăннă. Çак ĕç тавра колхозсенче массăллă-ăнлантарулă ĕçе анлăн организациленĕ, ку тĕлĕшпе эпир ытти районсенчен юлмастпăр. Хĕрлĕ Çар фондне кашни кунах çĕршер пăт тырă каять. Çĕнтерÿ туса пыракан Хĕрлĕ Çар фондне ытларах тырă парассишĕн кашни колхозрах ăмăртса ĕçлеççĕ.

Н. ВОЛКОВ,
ВКП(б) Елчĕк райкомĕн секретарĕ.

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, октябрĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ паян пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă:

Союзниксен Леопольд каналĕ хĕрринчи укреплениййĕнче çаплах хаяр çапăçусем пынă. Тăшман плацдарма пĕтерсе тăкма хăтланни ăнăçман. Союзниксен октябрĕн 9-мĕшĕнче ирхине Шельда шывĕ вăррин кăнтăр çыранне аннă çарĕсем чылай пысăк çитĕнÿсем тунă. Антверпенран çурçĕртерехре те çитĕнÿсем тунă.

Аахен районĕнче паллă улшăнусемех пулман.

Мец хулинчен çурçĕртерехре Мезьерле-Мец хули районĕнче тăшманăн контратакине сирсе янă. Нанси хулинчен çурçĕртерехри районра союзниксен малти чаçĕсем Летрикур хулине çитнĕ. Çав секторта тата темиçе хулана ирĕке кăларнă, çав шутра—Сиври, Ликсьер тата Серьер хулисем.

1.100 йывăр бомбардировщик ытла, питĕ йышлă истребительсем хÿтĕлесе пынипе, октябрĕн 9-мĕшĕнче Кăнтăр-хĕвеланăç Германири вăрçă объекчĕсене атакăланă. Пуринчен ытла Франкфурт, Кобленц тата Майнц районĕсене тапăннă. Октябрĕн 10-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле йывăр бомбардировщиксем Рур облаçĕнчи Бохум хулине хаяррăн тапăннă. Вильгельмсхафенри объектсем çине те бомбăсем пăрахнă.

ЛОНДОН, октябрĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ паян пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă: Италире çанталăк начар тăнă пирки тата шывшур пирки 8-мĕш арми секторĕнче патрульсем çеç кĕрешнĕ. 5-мĕш арми секторĕнче малта пыракан чаçсем хăйсен позицийĕсене кăшт лайăхлатнă.

Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашенчи авиацийĕ 300 вĕçеве яхăн тунă.

* * *

ЛОНДОН, октябрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ октябрĕн 11-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă:

Шельда шывĕ вăррин кăнтăр хĕрринче аннă союзниксен çарĕсем Брескенс хулинчен хĕвелтухăçнерехре хăйсен позицийĕсене лайăхлатнă. Леопольд каналĕ патĕнче тăшмана тапăнма тунă укреплени районĕнче çаплах хаяр çапăçусем пыраççĕ. Антверпен хулинчен çурçĕртерехре союзниксен çарĕсем Голландин шалти районĕсенчен Зюд Бейерланда каякан тĕп çула татнă.

Нимĕçсен Аахен хулинчи çарĕсене парăнма хушнă ультиматумăн срокĕ октябрĕн 11-мĕшĕнче 10 сехет те 15 минутăра тухнă.

Унччен малтан Аахен хулине çавăрса илме кайнă союзниксен çарĕсен çурçĕрти группировкин чаçĕсем Шарфенберг тата Барденберг хулисене туртса илнĕ те Вюрселен хули патнелле кайнă. Кăнтăр енчен тата хĕвелтухăç енчен куçса пыракан ытти чаçсем, Гаарен хули патне çитсе, Аахен хулипе Кельн хули хушшинчи шоссе çулне татнă. Кăнтăр тĕлнелле Гаарен хулин çурçĕрти пайне тăшмантан тасатнă. Гаарен хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнелле тата Барденберг хули районĕнче нимĕçсен контратакисене сирсе янă. Гюртген хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре хаяр çапăçусем пыраççĕ, кунта союзниксен çарĕсем кăштах малалла кайнă.

Моншау районĕнчи чикĕ тăрăхĕнче патрульсем кĕрешнĕ тата артиллери персе тăнă. Мезьер-ле-Мец хулинче кашни çуртшăн çапăçу пырать. Ле Тилло секторĕнче хаяррăн çапăçнă хыççăн союзниксен çарĕсем тăшмана тапăнма самаях пысăк укреплени тунă, тăшмантан çирĕплетнĕ темиçе пункта туртса илнĕ. Шампань районĕнче Бельфор хулинчен хĕвеланăçнерехре союзниксен çарĕсем малалла кайнă.

Çанталăк начар тăнă пирки авиаци вăйлă çапăçма пултарайман.

ЛОНДОН, октябрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ октябрĕн 11-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă:

Италири фронтăн вăтаçĕрти участокĕнче 5-мĕш армин Англи чаçĕсем темиçе кун хушши пынă йывăр çапăçусем хыççăн Монте Чече ятлă паха çÿллĕ вырăна туртса илнĕ. Сулахай флангра 5-мĕш армин Америка чаçĕсем малалла кайнă.

8-мĕш арми фрончĕн участокĕнче Англи тата Инди чаçĕсем хăйсен Фарнето хули районĕнчи позицийĕсене лайăхлатнă.

Албанире союзниксен чаçĕсем Албани çыранĕнче Корфу утравĕнчен 10 мильăра ларакан Саранде хулине туртса илнĕ. 500 гитлеровеца яхăн тыткăна илнĕ.

Грецире патрульсем кĕрешнĕ.

Союзниксен авиацийĕ тăшманăн Çурçĕр Италири тата Югославири çулйĕрĕсене тапăннă.

Çыранри оборона авиацийĕ Адриатика тинĕсĕн çурçĕр пайĕнче тăшман судисем çине бомбăсем пăрахнă.

АНГЛИ ÇАРĔСЕМ КОРИНФ ХУЛИНЕ ЙЫШĂННА

ЛОНДОН, октябрĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи вăйĕсен штабĕн пĕлтерĕвне парать. Пĕлтерÿре çапла каланă: Англи çарĕсем октябрĕн 10-мĕшĕнче Пелопоннес çурутравĕн çурçĕр хĕрринче ларакан Коринф хулине кĕнĕ. Тăшман хирĕç тăни пулман.

Финлянди хаçачĕсем Çурçĕр Финляндире нимĕçсем тунă ирсĕр ĕçсем çинчен

СТОКГОЛЬМ, октябрĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Финлянди хаçачĕсем нимĕçсем Çурçĕр Финляндире, пуринчен те ытларах Хюрюксальми хулинче тунă ирсĕр ĕçсем çинчен нумай çырса кăларнă.

Хаçатсем тата Кемь хулинчен тарнă пĕр финн каласа кăтартнине пичетлесе кăларнă. Вăл каланă тăрăх, Кемь хулинче нимĕçсем финсене тытасшăн ухутари пекех çÿренĕ.

БУДАПЕШТ ХУЛИНЧИ ХАЛĂХА ЫТТИ ÇĔРЕ КУÇАРАÇÇĔ

СТОКГОЛЬМ, октябрĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). «Свенска дагбладет» хаçат корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: Венгри правительствин ларăвĕнче Будапештри граждăнла халăха Хĕвеланăç Венгрие куçарса кайма йышăннă. Дипломати представительствисем те Будапештран тухса каяççĕ. Германи посольстви унтан тухса кайнă ĕнтĕ.

АВСТРИРЕ ПĂЛХАВСЕМ ЧАРĂНМАН-ХА

СТОКГОЛЬМ, октябрĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). «Стокгольмс тиднинген» хаçатăн Бернри корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: нейтральнăй çынсем каланă тăрăх, Австрире пăлхавсем халь те чарăнман-ха. Вĕсем Венăра апат-çимĕç нормине çĕнĕрен чакарнă пирки сиксе тухнă та Австрин ытти районĕсене те сарăлнă. Штирире пăлхавçăсен пĕр ушкăнĕ Грац хулинче çирĕпленсе ларнă. Эсэсовецсен чаçĕсем вĕсене пусарайман. Нимĕçсем çав хула çине сывлăшран бомбăсем пăрахассипе хăратаççĕ.

ЖЕНЕВА, октябрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). «Газетт де Лозанн» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, гестапо Австрире паллă çынсене нумайăшне, çав шутра Вена университетĕнчи темиçе профессора, арестленĕ. Арестленнисене концентрациллĕ лагерьсене янă. Нимĕçсем ют çĕршыв рабочийĕсене хаяррăн тыткалаççĕ. Иртнĕ эрнере ют çĕршывсен 12 рабочине ют çĕршыв радиостанцийĕсем паракан хыпарсене итленĕшĕн асаплантарса вĕлернĕ.

Ют çĕршыв рабочийĕсем йышлăн восстани тăвассинчен хăраса, нимĕçсем вĕсем хушшинче чылайăшне арестлеççĕ. Ют çĕршыв рабочийĕсем патĕнче вăйлă ухтарусем тăваççĕ, гестапо вĕсем патĕнче хĕçпăшал вырăнне усă курма юрăхлă япаласене шырать. Ют çĕршыв рабочийĕсенчен çĕçĕсене тата касакан ытти япаласене пурне те тытса илеççĕ.

ГЕРМАНИРЕ АПАТ-ÇИМĔÇ ТĔЛĔШПЕ ЙЫВĂРЛĂХСЕМ ÿСНĔ

СТОКГОЛЬМ, октябрĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Германире апат-çимĕç тĕлĕшпе ĕçсем мĕнле пыни çинчен Швецире тухакан «Индустри» журнал çапла çырать: Германин кăçал Румынире пухакан апат-çимĕçсĕр пурăнмалла пулать. Çакă вăл нимĕçсене, уйрăмах та Украина аларан вĕçерĕннĕ хыççăн, питĕ хытă пырса çапать. Кăçал Германире çĕрулми иртнĕ çулхисенчен нумай сахалтарах тухĕ, теççĕ. Выльăх апачĕ те çитмест. Çу таврашсене Кăнтăр Европăпа Норвегирен сахалтарах илсе пыма пуçланă пирки çу запасĕ те чакнă. Сыснасен хисепĕ тата ытларах чакмалла.

ЖЕНЕВА, октябрĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Швейцарире тухакан «Националь цейтунг» хаçат çапла пĕлтерет: ĕç вăйĕ çитмен пирки Германире апат-çимĕçпе çĕрулми пухса илес ĕçе начар туса ирттернĕ, çавна пула вĕсем сахалтарах тухнă. Тырпулпа апат-çимĕç турттарма транспорт хатĕрĕсем те нумай çитмеççĕ.

СТРАССБУРГ ХУЛИНЧИ ЙЫШЛА АРЕСТСЕМ

ЖЕНЕВА, октябрĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Цюрихран пĕлтернĕ тăрăх, гестапо Страсбург хулинче çынсене йышлăн арестлет. Нумаях пулмасть укреплениссем тăвас ĕçре ĕçлеме килĕшменшĕн 400 çынна арестленĕ.

СПОРТ

Лайăх ĕçлекен физкультура командине тата колхоза награда пани

ЕТĔРНЕ. Çак кунсенче партин XVII-мĕш съезчĕ ячĕпе тăракан колхоза тата çав колхозри физкультура командине кăçал колхоз çамрăкĕсен республикăри йĕлтĕрлĕ ăмăртăвĕнче лайăх тĕслĕхсем кăтартнăшăн ВЛКСМ Центральный Комитечĕн тата Пĕтĕм Союзри Физкультурăпа спорт комитечĕн Хисеплĕ грамотипе хаклă парнисене пачĕç.

Награда панă кун Етĕрне хулинче пуху пулса иртрĕ. Кунта комсомол организацийĕсен хăшпĕр секретарĕсемпе физкультурниксем пулчĕç. Пухăва ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ Бурашников юлташ уçрĕ. Пухура Чăваш Обкомĕн секретарĕ Лисин юлташ пулчĕ. Чăваш Обкомĕн Çарĕç отделĕн заведующийĕ Енчиков юлташ сăмах тухса каларĕ. Вăл 1945 çулхи спорт сезонĕн задачисемпе ăна тимлĕн хатĕрленесси çинчен каларĕ, колхозри физкультура командине çитес хĕлре пулакан ăмăртусенче тата çĕнĕ ÿсĕмсем тума сĕнчĕ. Ун хыççăн ВЛКСМ Чăваш Обкомĕн çарĕç енĕпе ĕçлекен секретарĕ Петрухин юлташ ВЛКСМ Центральный Комитечĕн Хисеплĕ грамотине партин XVII-мĕш съезчĕ ячĕпе тăракан колхозăн председательне, Республикăри физкультурăпа спорт комитечĕн председателĕ Васильев юлташ Пĕтĕм Союзри физкультурăпа спорт комитечĕн хаклă парнисене çак колхозри физкультурниксене пачĕç. Вĕсем награда илнисене саламларĕç, малашне татах та лайăхрах ĕçлеме чĕнчĕç.

Награда илнисем хушшинче Барсов, Зорных, Щекинин, Аникина, Мухартова, Мардарейкина, Иванова физкультурниксем тата районри физкультурăпа спорт комитечĕн председателĕ пулса ĕçленĕ Закамская, ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ Бурашников, ВКП(б) райкомĕн Çарĕç отделĕн заведующийĕ Князьков юлташсем пур. Командăри участниксенчен Барсов юлташ сăмах тухса каларĕ.

* * *

Иртнĕ вырсарникун Шупашкарта спорт сезонĕ хупăннă ятпа «Сталинец» спорт обществин стадионĕнче Дзержинск хулипе Шупашкар хулинчи командăсен футбол вăййи пулса иртрĕ. Дзержинск команди 1:0 шутпа çĕнтерчĕ.

Ответлă редактор **В. Я. ЯКОВЛЕВ.**

ШУПАШКАРТИ КИНОТЕАТР

октябрĕн 13-мĕшĕнчен пуçласа кунсеренех «МАШЕНЬКА» ятлă саслă, илемлĕ фильм кăтартать. Сеанссем çак вăхăтра пуçланаççĕ: 12, 14, 16, 18, 20, 22 сехетре.

Билетсем малтанах илсе хума юрать. Касса ирхине 10 сехетрех ĕçлеме пуçлать.

Часах Совет Союз Геройĕн Зоя Космодемьянскаян пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен ÿкернĕ «ЗОЯ» ятлă саслă, илемлĕ çĕнĕ фильм кăтартма тытăнаççĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительпе секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 00738 Типография № 1. Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2, ф. 6. 59×42 п. л. Тираж 16.000 экз.